15-мĕш çул тухать.

# КАПКĂН

№ 21. ДЕКАБРЬ 1939 çул
„Чăваш Коммунĕ" хаçат кăларать

## Капиталистсен çĕнĕ çулĕ




„Çĕр çинче мир"...        „Çынсемшĕн ырăлăх"....

# Ленин ĕçне малалла туса пыракан аслă Сталин юлташа

*Хаклă тус тата боевой юлташ!*

Большевикла Партин Центральный Комитечĕ сана, Ленин тусне тата унăн ĕçне малалла туса пыракан аслă çынна, партипе совет халăхĕн çулпуçне—эсĕ утмăл çул тултарнă кун—хĕрӳллĕн саламлать.

Хĕрĕх çул хушши ытла эсĕ пролетариллĕ революци ĕçне, рабочи класăн тата пĕтĕм ĕçхалăхĕн ĕçне туса пыратăн. Ленин партишĕн, пролетариат диктатуришĕн кĕрешнĕ çĕрте эсĕ унăн чи шанчăклă соратникĕ пулнă. Нумай çулсем хушши эсĕ Ленинпа пĕрле большевикла хăватлă партине туса, туптаса пытăн. Ленинпа пĕрле эсĕ 1917 çулти Октябрьте партипе рабочи класа хĕçпăшаллă восстанине илсе пытăн. Ленинăн чи çывăх помощникĕ пулса тăрса, эсĕ Октябрьти восстанине хатĕрленессин тата рабочи класс влаçа ăнăçлăн кĕрешсе илессин пĕтĕм ĕçне тӳррĕмех ертсе пытăн.

Ютçĕршывсенчи захватчиксене тата буржуаллăпомещикле белогвардейщинăна хирĕç тăван çĕршывшăн пынă граждăн вăрçи çулĕсенче эсĕ, Сталин юлташ, Ленин ертсе пынипе пур фронтсенче те, революци кунçулне татса панă пур фронтсенче те, Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсене тӳррĕмех хавхалантарса пыраканĕ, вăл çĕнтерӳсен организаторĕ пулнă.

Ленин вилнĕ хыççăн большевиксен партийĕ эсĕ ăслăн ертсе пынипе, хăй çулĕ çинчи калама çук пысăк йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, пирĕн çĕршыва социализм çĕнтерĕвĕ патне илсе çитерчĕ.

Халăхăн ирсĕр тăшманĕсем—троцкистсем, зиновьевецсем, бухаринецсем рабочи класран, совет халăхĕнчен вĕсем пирĕн çĕршывра социализм çĕнтерме пултарассине шанса тăнине туртса илесшĕн пулчĕç, партине шалтан аркатса яма, большевикла партин пĕрлĕхне çĕмĕрсе тăкма, совет влаçне тата социализмлă революцине пĕтерсе хума пĕр хут çеç мар хăтланса пăхрĕç. Социализм тăшманĕсене хирĕç, парти тăшманĕсене хирĕç пынă принциплă тимлĕ кĕрешӳре, эсĕ ертсе пынипе ленинизмшăн пынă кĕрешӳре, Центральный Комитет тата пирĕн парти таччăн пĕтĕçсе пĕрлешрĕ. Эсĕ Ленинăн социализм пĕр çĕршывра çĕнтерме пултарасси çинчен калакан теорине хӳтлесе хăвартăн, вăл аслă теорине малалла аталантарса сарса ятăн, вăл теорипе партине тата Совет Союзĕнчи ĕççыннисен миллионлă массисене хĕçпăшаллантартăн—çакă вăл революци тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларса çĕмĕрсе тăкассине пурнăçларĕ.

Эсĕ ертсе пынипе большевиксен партийĕ çĕршыва социализмла индустриализацилессине пурнăçа кĕртрĕ, индустриллĕ çĕнĕ вучахсемпе районсем, йывăр тата çăмăл индустрин первокласнăй заводчĕсене, машиностроенин хăватлă заводчĕсене, туса хучĕ, çаксене туни вăл пĕтĕм халăх хуçалăхне техника тĕлĕшĕнчен реконструкцилессине тата СССР оборонин чи çĕнĕ средствисемпе хĕçпăшаллантарассине пурнăçа кĕртрĕ. Эсĕ ертсе пынипе парти ялта çав тери тарăн революциллĕ улшăнăва—талкăшпех коллективизаци тăвас тата кулаксем класс пулса тăнине пĕтерес ĕçе туса ирттерчĕ, колхоз стройĕ çĕнтернĕ никĕс çинче нумай миллионлă хресченсен культурăллă та пуян пурнăç не тăвас ĕçе пурнăçа кĕртрĕ. Пирĕн çĕршыв индустриллĕ хăватлă держава, коллективлă шултра çĕрĕç çĕршывĕ, социализм çĕнтернĕ çĕршыв пулса тăчĕ.

Çак çитенӳсен никĕсĕ çинче Совет Союзĕнчи халăхсен культури хăвăрт ӳссе пырать. Совет интеллигенцине,—Совет влаçне, социализм ĕçне чĕререн парăннă совет интеллигенцине туса хунă.

Эсĕ ертсе пынипе Партипе Совет влаçĕ первокласнăй техникăпа хĕçпăшалланнă хăватлă та никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çар—хамăрăн тăван çĕршыва тулашри пур тăшмансенчен те сыхлакан шанчăклă хӳтлĕх пулса тăракан Хĕрлĕ Çар туса хучĕç.

Рабочи класс хресченсемпе союзлă пулса, большевикла парти ертсе пынипе, çынна çын эксплоатацилессине ĕмĕрлĕхех пĕтерчĕ тата ССР Союзĕнче çĕнĕ строй, социализмлă строй туса çирĕплетрĕ, çак строй вăл кризиссене те, ĕçсĕрлĕхе те пĕлмест, ĕççыннисен материальнăй пурнăç ырлăхĕпе культурăллă виçине пĕр пăркаланмасăр ӳстерсе пырассине пурнăçлать. Пирĕн кĕрешӳн çак тĕп итогĕ—пĕтĕм тĕнчипех историллĕ пĕлтерĕшлĕ итог пулса тăрать, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем социализм çĕнтерессине шанса тăнине çирĕплетет.

Эсĕ калама çук активлăн тата тӳррĕмех ертсе пынипе пирĕн парти нумай нациллĕ хăватлă государство туса хучĕ, ССР Союзĕнчи халăхсен аслă тата никам çĕмĕрейми туслăхне—вĕсем ӳссе чечекленсе пырассине, вĕсене никам та çĕнтерес çук кине шантарса тăракан аслă туслăха—çирĕплетрĕ.

Эсĕ, Сталин юлташ, Ленин пекех, революциллĕ теорине аталантарса сарса пырас тата пропагандăлас ĕçе яланах пысăк вырăна хунă тата халĕ те пысăк вырăна хуратăн. Санăн классикла теориллĕ ĕçӳсем, хамăр çĕршыври тата пĕтĕм тĕнчери миллионшар çынсен тивĕçлĕхĕ пулса тăнă ĕçӳсем империализмла пролетариллĕ революци саманин, çĕрĕн ултă пайĕнчен пĕр пайĕнче социализм çĕнтернĕ саманан çĕнĕ условийĕсенче марксизма-ленинизма малалла аталантарса сарса пыни пулса тăраççĕ. Эсĕ государство çинчен калакан марксистла-ленинла теорине малалла аталантарса ятăн, капитализмлă йĕритавралăх условийĕсенчи социализмлă государство çинчен калакан теорине хатĕрлесе çитертĕн. Партине марксизмпа-ленинизмпа хĕçпăшаллантарса пырса, эсĕ ăна организаци тĕлĕшĕнчен ывăнма пĕлмесĕр пĕтĕçтерсе çирĕплетсе пытăн. Çак никĕс çинче пирĕн партин сталинла пĕрлĕхне пурнăçа кĕртнĕ.

Большевикла парти эсĕ тăрăшнипе тата ертсе пынипе тунă чаплă çитĕнӳсенчен пĕри вăл—кадрсем хăвăрт ӳссе пыни, социализм строительствипе социализм çĕршывĕн оборонин нумай пиншер çĕнĕ работникĕсене çитĕнтерсе кăларни пулса тăрать.

Халăхшăн тăвакан аслă ĕçе хăвăн пĕтĕм вăйхална парса, эсĕ, Сталин юлташ, Ленин пекех, хăвăн халăхна юрататăн тата халăхран уйăрălми çын пулса тăратăн. Сана, Ленина юратнă пекех, Совет Союзĕнчи тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем хĕрӳллĕн юратаççĕ.

Паян пирĕн парти тата Совет Союзĕнчи халăх-

сем, эсӗ утмӑл ҫул тултарнӑ кун сана саламлаҫа, Ленин—Сталин ялавӗ айӗнче хӑйсен Центральный Комитечӗ тавра нихӑҫанхинчен те таччӑнрах пӗтӗҫсе тӑраҫҫӗ тата коммунизм татӑклӑнах ҫӗнтерессишӗн малалла кӗрешме хатӗр тӑраҫҫӗ.

Сывӑ пултӑр большевиксен никам ҫӗнтерейми партийӗ, Ленин—Сталин партийӗ!

Парти, рабочи класс хавасланӗшӗн, совет ҫӗршывӗнчи тата пӗтӗм тӗнчери халӑхсен хавасланӗшӗн нумай ҫулсем пурӑн, пирӗн тӑван Сталин!

**Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партин Центральный Комитечӗ.**



И. В. СТАЛИН.

# Юратнӑ туссем

Вӗсем тӑваттӑшӗ те пӗр ялта, пӗр урамри ҫемьесенче ҫуралса, пӗрин хыҫҫӑн тепри сывлӑхлӑн та патваррӑн ӳссе ҫитӗннӗ. Ҫытма йӗм тӑхӑнса хӑйсем тӗллӗнех урам урлӑ каҫма вӗреннӗренпе пӗрле выляса ҫӳренӗ, пӗри тепринчен уйӑрӑлма пӗлмен, хӑйсен ачалла ӑнланӑвӗ тӑрӑх ҫав тери пысӑк тесе шутланӑ ыйтусене пӗрле пуҫтарӑнса питӗ те хӗрӳллӗн сӳтсе-явнӑ. 8-шар ҫула ҫитсен, пурте шкула вӗренме кӗнӗ, пӗринчен пӗри лайӑх вӗреннӗ. Вӗсенчен, чи асли - Кошкин Иван хӑйӗн юлташӗсен умӗнче чи авторитетлӑ шутланнӑ,—вӑл Октябрь тантӑшӗ пулнӑ. Хӑйсем тӗллӗн пысӑк ыйтусем сиксе тухсан, Шакмаков Василий, Козлов Никандр, Котелкин Павел,—пурте Кошкин патне черезвычайлӑ йӗркепе пуҫтарӑнса, ҫав ыйтӑва сӳтсе-явнӑ.

Чечекленекен социализмлӑ ҫӗршывпа пӗрле вӗсем те телейлӗн ӳснӗ, яштака пӳ-ҫиллӗ, кӑмӑллӑ сӑн-питлӗ, ӗҫре хастарлӑ каччӑсем пулса тӑнӑ.

Савӑнӑҫлӑ пурӑнӑҫра юрату та часах ешерет: пирӗн каччӑсем пӗрин хыҫҫӑн тепри пике хӗрсене куҫ хывнӑ, тӑра киле юратури дипломатиллӗ калаҫусене пуҫласа янӑ, унтан сӑмахсем татнӑ, юлашкинчен юратнӑ туссем пулса тӑнӑ. Хӑйсен кӑмӑллӑ каччисем пӗр тӑвансем пек пӗр уйӑрлмасӑр ҫӳренисене курса, хӗрӗсем те ӗҫре пӗрле ҫӳреме, вӑйӑсене пӗрле тухма пуҫланӑ. Кун пек туни хӗрсене те, каччӑсене те лайӑх пулнӑ, тӑватӑ туслӑ мӑшӑртан пӗри те теприсем пирки кӳлешес кӑмӑла тытман, пӗрисем теприсене телей ҫеҫ суннӑ.

1937-мӗш ҫулта тӑватӑ хӗр-тантӑшӑн та юратнӑ туссенчен вӑхӑтлӑха уйӑрлма тивнӗ: Ульха тусӗ—Кошкин Иван Инҫетри Хӗвелтухӑҫне, Антони тусӗ—Шакмаков Василий Кӑнтӑрти границӑна, Васса тусӗ—Козлов Никандр Хӗвеланӑҫри границӑна, Ксенки тусӗ—Котелкин Павел Ленинград хули ҫывӑхне ҫар службине кайнӑ. Хӑйсен савнийӗсем маттур каччӑсем пулса Хӗрлӗ Ҫар ретне тӑма тивӗҫ илнишӗн савӑннине хӗр-тантӑшсем пӗр-пӗринчен пытарма пултарайман. Пӗри теприне пӗр талӑк хушши курмасан та, вӗсене темӗн чухлӗ вӑхӑт иртнӗ пек туйӑннӑ.

Пӗр-икӗ уйӑх иртсен ялти почтальон комсомолец Якку почтӑран ҫырусен ҫыххине илсе тухсан, чи малтанах Ульхапа унӑн тантӑшӗсем патне утнӑ: е кашни ҫыхӑра обязательно вӗсенчен пӗрин валли ҫыру пулнӑ е хӑйсем ҫыру парса янӑ. Кун пек туни почтальона ытлашши чӑрмав ан кӳтӗр тесе, хӗр-тантӑшсем почтальона пур ҫырусене те Ульха патне пырса пама хушнӑ.

Якку вара Ульхасен килне „почта отделенийӗн пайӗ“ тесе ят панӑ.

Кашни ҫыру ҫитсенех хӗр-тантӑшсем пӗрле пухӑнса ларнӑ та ҫырусене вуланӑ, ҫамрӑк чӗресем васкаса, кӑртлатсах тапнӑ, питкуҫсем ҫинче савӑнӑҫпа хаваслӑх йӑлтӑртатса тӑнӑ.

1938-мӗш ҫулхи июль уйӑхӗнче Инҫет Хӗвелтухӑҫри границӑра, Хасан кӳлли районӗнче, амӑшӗнчен ӑссӑр ҫуралса сӗм ухмах ӳснӗ самурайсем пирӗн хаклӑ тӑван ҫӗршыв ҫине тапӑнма хӑтланчӗҫ. Мухтавлӑ Хӗрлӗ ҫар ҫав урнӑ ҫынсене „ҫапплантармалли кӗпе“ тӑхӑнтартса, сопкӑсен тӳписем ҫинчен таҫта ҫитиччен ывӑтса ячӗ.

Пӗр ирхине Ульха хӑйӗн тусӗнчен, Кошкин Иванран, ҫыру илнӗ. Ку ҫыру ахаль ҫыру пулман, ӑна ҫапӑҫу уйӗнчен ҫырнӑ. „Тӑшман пульли манӑн урана суранлатрӗ пулин те, эпӗ ҫапӑҫуран пӑрахса каймарӑм. Самурайсене шӑпӑрпа шӑлса тасатнӑ пек тасатрӑмӑр“, тенӗ вӑл. Пӗр талӑк хушшинче ҫак хыпар пӗтӗм ялӗпе саралнӑ. Пурте Кошкин Ивана мухтанӑ, уншӑн савӑннӑ, ыттисенчен ытла Ульха савӑнӑҫӗн вӗҫӗ-хӗрри пулман: герой пулса тӑнӑ-ҫке унӑн тусӗ. „Эх, мӗншӗн манӑн тусӑм та унпа пӗрле пулман-ши?“ тесе шутланӑ Ульхан тантӑшӗсем, хӑшпӗр самантсенче ун ҫине вӑрттӑнла кӗвӗҫ туйӑмпа та пӑхса илнӗ. Вӗсене Ульха хӑйӗн пуҫне ытлашши ҫӗкленӗ пек туйӑннӑ.

1939-мӗш ҫулхи август уйӑхӗнче Монголия Халӑх Республикинчи Буир-Нур кӳлли районӗнче Монгол-Совет войскисем Японин тӑнкам самурайӗсене тата тепӗр хут ҫӗкле-ҫӗкле ҫапса хӗнерӗҫ. Социализм ҫӗршывӗн боецӗсем тата пысӑк мухтавпа витӗнчӗҫ. Ҫав кунсенче Ульхан тантӑшӗ Антони хӑйӗн тусӗнчен, Шакмаков Василирен ҫыру илнӗ. Юратнӑ тус красноармеецсен паттӑрлӑхӗ ҫинчен, хӑй ҫапӑҫусенче нумай самурайсене вӗлерсе пӗтерни ҫинчен каласа кӑтартнӑ. Ҫак хыпар та ял тӑрӑх „молния“ телеграмма пек саралнӑ.

1939-мӗш ҫулхи сентябрӗн 17-мӗшӗнче хӑватлӑ Хӗрлӗ ҫар, хӑйӗн ирӗке кӑларас аслӑ задачине пурнӑҫласа, Хӗвеланӑҫ Белоруссипе Хӗвеланӑҫ Украинӑри хамӑр тӑвансен ӗнси ҫинче ларакан пансене ҫапа-ҫапа сирпӗтме пуҫларӗ. Сӗмсӗр те мухтанчӑк пансем ури тупанӗсене кучӗсене тивӗртсех тарчӗҫ. Ҫав кунсенче почтальон Якку колхоз йӗтемми ҫине пырса Вассана шыраса тупнӑ та, инҫетри фронтран килнӗ ҫырӑва тыттарса хӑварнӑ. Хӗр-тантӑшсем ку ҫырӑва хӑйсем ҫеҫ вулама шутланӑ пулнӑ, анчах кун пек тума ниепле те май килмен. Пӗрерӗн-пӗрерӗнех вӗсен тавра халӑх пуҫтарӑнса ҫитнӗ, юлашкинчен ҫыру алӑран-алла ҫӳреме пуҫланӑ. Козлов Никандр Хӗрлӗ ҫарӑн мухтавлӑ маршӗ ҫинчен, хӑй разведкӑна кайсан, Польшӑн 30 салтакне сӗм пӗччене тыткӑна илни ҫинчен каласа кӑтартнӑ. Пурте Козлов Никандра мухтанӑ, ӑна ҫирӗп сывлӑх суннӑ, пуринчен ытларах Васса хӑйне чӑн пысӑк телейли тесе шутланӑ. Тусӗ ҫавӑнта пулсан, вӑл йӗри-тавра халӑх тӑнине пӑхмасӑрах, ӑна ыталаса чуптума хатӗр пулнӑ.

Тӑватӑ хӗр-тантӑш ҫаплипех пӗр-пӗринчен уйӑрлма пӗлмен, пӗрле пуҫтарӑнса ларсанах харпӑр хӑйӗн тусӗ ҫинчен каласа кӑтартнӑ, ӗлӗк пӗрле ҫӳренисене аса илнӗ, е пулни ҫумне пулманнине те хушса хунӑ пулӗ. Пӗр Ксенки ҫеҫ хӑйӗн тусӗ ҫинчен ку хутра нимех те калама пултарайман. „Отлично вӗренетпӗр, кунсем питӗ савӑнӑҫлӑ иртеҫҫӗ“, тесе ҫырнӑ унӑн тусӗ, анчах ытти тантӑшӗсен хушшинче вӑл хӑйне темӗнле катӑк юлнӑ пек шутланӑ. Ульха, Антони, Васса хӑйсен тусӗсем ҫинчен каласа кӑтартнӑ е ҫырусем вуласа панӑ чухне ӑна хӑй чӑнах та катӑк юлнӑ пек туйӑннӑ. Ҫамрӑк хӗр хӑйӗн тантӑшӗсем умӗнче салхуллӑрах ларма пуҫланӑ, кун ҫинчен вӑл систересшӗн те пулман, анчах ыттисенни пек сӑмах килсе пыманнине пытарма май килмен. Котелкин Павел аллине тӑшман ҫаклансан чӗрӗлле хӑтӑлма пулта-

раҫ ҫуккине ялти ҫынсем пурте пӗлнӗ. Нумай иртет-и, сахал-и, ҫак сӑмах чӑн-чӑн ӗҫре куранна.

Декабрь уйӑхӗн малтанхи кунӗсенче Ксенки Павӑлран ҫыру илнӗ. Конвертӑн аял енче „Действующая армия" тесе ҫырнине вуласан, хӗрӗн чӗри минутра виҫӗ пин оборот тӑвакан мотор евӗрлӗ ӗҫлеме пуҫланӑ.

Ҫырӑвӗ пуринчен ытларах информациллӗ пӗлтерӳ евӗрлӗ пулнӑ:

„Юратнӑ тусӑм Ксенки!

Белофиннсем пире хирӗҫ мӗн тери тискер провокаци туни ҫинчен, Финляндия Халӑх Правительстви чӗннипе пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар Финляндия халӑхне Каяндер-Эркко-Маннергейм палачсен пусмӑрӗнчен хӑтарма кайни ҫинчен эсир пурте пӗлетӗр пулӗ. Тӑван ҫӗршыва, Аслӑ Сталина чӗрере тытса, эпир тӑшмана хирӗҫ паттӑррӑн пыратпӑр. Ӗнер эпир пӗр отделени красноармеецсем белофиннсен пӗр ротине тӗпӗпе ҫӗмӗрсе тӑкрӑмӑр. Бандитсем ахаль чупса мар, хир мулкачи пек сиккипе сиксе тараҫҫӗ. Халӗ малалла каятпӑр. Сывӑ пул, сана ыталатӑп. Иксӗмӗр пӗрле пуласса шанатӑп.

Сана савакан Котелкин Павел".

Ксенкишӗн ҫак пӗчӗк хут татӑкӗ листа тулли, тем тери илемлӗ сӑмахсемпе ҫырса тултарнӑ ҫыруран та темиҫе хут нумай пек туйӑннӑ. Пӗрре вуланӑ вӑл, тепре вуланӑ, анчах кашни хутӗнчех ӑна чи кирлӗ, чи хаклӑ сӑмахне курмасӑр хӑварнӑ пек туйӑнса тӑнӑ. Ксенки ку ҫырӑва хӑйӗн аллинчен вӗҫертесшӗн пулман, ӑна вӑл арча тӗпнех пытарса хунӑ, анчах ку ҫырӑва вуҫах урӑхла раскал кӗтсе тӑнӑ. Каҫхине тантӑшӗсем пырсан ҫырӑва арча тӗпӗнчен кӑларма тивнӗ. Малтан вӑл тантӑшсен аллисем тӑрӑх ҫӳренӗ, унтан каччӑсен аллине ҫакланнӑ, юлашкинчен ,,ҫӗр ҫӑтнӑ" тенӗ пек таҫта кайса ҫухалнӑ. Ксенки юлташӗсем каччӑсене ультиматум парса пӑхнӑ, анчах ҫыру ҫаплипех каялла таврӑнман. Юлашкинчен каччӑсем ҫырӑва тепӗр талӑкран кӳрсе пама обязательство йышӑннӑ та тухса кайнӑ. Тепӗр кунне Котелкин Павел ҫырӑвне колхозри стена хаҫачӗ ҫинче пӗр сӑмахне улӑштармасӑр ҫырса кӑларнӑ. Хаҫат редакторӗ ҫыру ятне „Пирӗн боец ҫырӑвӗ" тесе ҫырса хунӑ. Хӑшпӗр колхозниксем Котелкин Павел хӑйӗн ҫырӑвӗнче именнӑ кама ыталанине ӑнланса илме пултарайман. Анчах ку вӑл чӑрмав пулман. Кашниех хӑйӗн ӑсӗнче ӑна хыттӑн ыталанӑ кашниех унпа пӗрле пулма пӗр рете тӑрса белофинсене ҫӗмӗрме кайма хатӗр пулнӑ.

**Никита Волков.**

---

# ПУЛӐ

Юхо—вӑл Финляндия чиккинче пурӑннӑ ватӑ та ӑста пулӑҫӑ. Ҫавӑнпа ӑна унӑн юлташӗсем „Пулӑсен мурӗ" тесе чӗнеҫҫӗ. Уншӑн вӑл хӑй те савӑнать:

— Ха-ха-ха! Эпӗ пулӑсен мурӗ, а эсир вӗсен савӑнӑҫӗ,—кулать Юхо.—Тытаймастӑр та, савӑнтаратӑр ҫеҫ вӗсене.

Кӑҫал Юхо икӗ чӑпта пулӑ типӗтсе пӳрт маччине хӑпартса хунӑ.

— Ан хуйхӑр, карчӑк, ку пулӑ пире хӗл каҫма ҫитет,—тесе йӑпатать Юхо арӑмне.

— Иртнӗ ҫулсенче пӗрер чӑпта ҫеҫ типӗтеттӗмӗр, ҫапах ҫитетчӗ, кӑҫал ытлашши те пур,—тет карчӑкӗ савӑнса...

Сасартӑк тупӑ сассисем кӗрле пуҫларӗҫ.

— Ах, типӗтнӗ пулла ӑҫта хурӑпӑр? Салтаксем килсен, ҫисе ярӗҫ!—хӑраса ӳкрӗ карчӑкӗ.

— Ан кулян, карчӑк! Кӗҫех Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем ҫитмелле. Вӗсем пирӗн пӗр пулла та тивес ҫук. Ак, Финляндия салтакӗсем ҫитсен, пӗр пулла та хӑвармӗҫ. Ӑна кӗтсех тӑр,—тет Юхо карчӑкне.

— Ай, пулла пытарасчӗ! Ҫисе тухса кайӗҫ те, выҫах тӑрса юлӑпӑр.

— Кирлӗ мара ан калаҫ эс. Хӗрлӗ Ҫар ҫитсен выҫӑ юлмӑпӑр. Вӗсем выҫлӑх мар, тутӑлӑх илсе килеҫҫӗ,—тесе лӑплантарать Юхо карчӑкне.

— Апла пулсан эпӗ нимӗн те пӗлместӗп. Эсӗ Ленинградра пулнӑ, ху пӗлетӗн,—тесе килӗшет карчӑк.

Юхо Совет ҫӗршывӗн чиккинчен инҫех мар пурӑнать. Вӑл Совет Союзӗнчи ҫынсем мӗнле пурӑннине лайӑх пӗлет. Ун ҫинчен нумай илтнӗ. Ҫавӑнпа шанать.

Нумаях та иртмерӗ, Финляндия ҫарӗн офицерӗсемпе салтакӗсем пырса ҫитрӗҫ.

— Ну, старик, пӳстарӑн. Пирӗнпе пӗрле пыратӑн,—терӗ ӑна офицер.

Юхо ҫара янахлӑ офицер ҫине пӑхрӗ те:

— Ӑҫталла каймалла, малалла-и е каялла-и?--терӗ.

— Эсӗ кам?

— Эпӗ-и? Пулӑҫӑ.

— Финн-и?

— Финн.

— Финн пулсан ӑҫталла каймаллине пӗлетӗн. Хельсинки еннелле ут.

— А-а... Эпӗ урӑх еннелле пулӗ тесе...

— Эс нумай палкаса ан тӑр. Уттар часрах!

— Ах, юлташ офицер, манӑн пӳрт тӑрринче типӗтнӗ пулӑ пурччӗ. Ӑна мӗн тӑвас? Илсе каяс-и?

— Эпӗ санщӑн юлташ мар! Ваше благороди! Юлташсем, ав, тупӑран переҫҫӗ.

— А-а... Эпӗ вӗсене пӗлетӗп. Манӑн апла пулсан ҫавӑнталла каймалла... Типӗтнӗ пулӑ сирех юлтӑр, тесе мӑкӑртаткаласа Юхо карчӑкне ҫавӑтрӗ те килӗнчен тухса кайрӗ.

— Ну, минӑ лартӑр!—терӗ офицер салтаксене хушса.

— Ӑҫта?

— Маччари пулӑ чӑптисен ӑшне. Пуллисене чӑптаран курӑнмалла тӑвас. Москальсем ӑна илсе ҫиеҫҫех.

Каланӑ—тунӑ. Пулӑ чӑптисен ӑшӗнче мина хатӗр. Пӗр пуллине пырса тытсанах пӗтерет.

Минӑсем лартса ҫӳрекен отряд тухса кайрӗ. Ун хыҫӗнчен урӑх чаҫсем пырса ҫитрӗҫ. Салтаккисем ҫимелли шыраса чупкалаҫҫӗ.

— Пулӑ!—кӑшкӑрчӗ пӗри.

Вунӑ-вунпилӗк салтак пулӑ чӑптисем патне чупса ҫитрӗҫ. Чӑптасене пырса тӗкӗнсенех: у-ух!!! сасӑ илтӗнчӗ. Юхон ҫуртне вут хыпса та илчӗ. Пулӑсемпе пӗрле финн офицерӗсем ҫӳлелле сирпӗнчӗҫ.

Юхопа карчӑкӗ вӑл вӑхӑтра Хӗрлӗ Ҫарӑн малти чаҫӗсемпе ҫитсе хутшӑнчӗҫ.

**М. Данилов—Чалдун.**

# КĔСКЕ КАЛАВСЕМ

## Çукки те пур

Пĕр хаçат корреспонденчĕ, ватă скептик, „Хĕрлĕ Хĕвелтухăç“ ятлă колхоза пырса кĕрет.

— Сирĕн клуб пур-и?—тет вăл хăй пекех ватă колхоз председательне.

— Пур, 500 çын вырнаçмалăх. Пĕлтĕр туса пĕтертĕмĕр. Кайса куратăр-и?

— А шкул мĕнле? Пур-и?

— Вăл та пур. Вăтам шкулах. Пин те икçĕр ача вĕренет.

— А выльăх фермисем?

— Пулмасăр! Сысна ферми хăвăр яла килсе кĕнĕ çĕртех, ката хĕрринче. Ĕне ферми вăн лешĕ, чус витни.

— А радио, телефон?..

— Вĕсем те пур. Куратăр-и, кашни пÿрт тĕлĕнчех пралуксем каркаланса тăраççĕ?

— А çутă мĕнле? Пур-и?

— Электричество çинчен калатăр-и? Пур, вăл та пур. Атя, тĕпчевçĕ юлташăм, курса çаврăнар.

— Мĕнле-ха вара сирĕн пурте пур? А çукки мĕн те пулин пур-и?

Ватă председатель сухалне тÿпенелле каçăртса пайтахчен шутласа тăрать.

— Çукки-и?—тет вăл юлашкинчен.—Çукки те пур. Сăмахран, планпа тума палăртнисенчен пурнăçа кĕмесĕр юлни çук. Пĕрре те!

## Паллашрĕç

Çĕнĕ стройкăна илсе каякан çул çинче икĕ çын тĕлпулаççĕ.

— Аван-и, юлташ!—тет вĕсенчен пĕри, кăвак шлепкине сывлăша çĕклесе.—Ăçталла çул тытатăн?

— Çĕнĕ стройкăна çитсе çаврăнасшăн. Командировка пекки—тет ăна хирĕç тепри.

— Ара мĕншĕн çуран?—тĕлĕнсе каять шлепкелли.—Эп хам работниксене кирек ăçта каймалла пулсан та машинăпа яратăп.

— Кунта инçех мар вĕт, 4—5 километр çеç.

— Çапах та ара. Урасем ĕшенме пултараççĕ. Тата сăн-сăпатăр та чирлĕ çынăнни пек.

— Пĕр-ик кун пуç ыраткаларĕ те паян самай пек туйăнать-ха. Иртсе кайрĕ пулас.

— Ай-яй-яй-яй!—пуçне силлет шлепкеллĕ çын.—Сирĕн учреждени руководителĕ хăйĕн кадрĕсене шеллемест пулмалла. Шелleме мар, пĕлмест те пулмалла. Чирлĕ çынсене çуран çÿретме юрать-иха вара? Ун пек руководительсене пухура ятлас пулать... Ăçта ĕçлетĕр-ха эсир?

— Сирĕн учрежденинче,—тет лешĕ.—Ара эпĕ эсир ертсе пыракан учрежденинчи счетовод вĕт. Иккĕмĕш уйăх ĕçлетĕп ĕнтĕ.

Вĕсем иккĕшĕ те тĕлĕнсех каяççĕ.

## Асап

Н. Айзманăн „Çÿпçипе хупăлчи“ ятлă комедине курса пĕтернĕ хыççăн, эпĕ тумтир илме вешалка патне пырса тăтăм.

— Интригисене аван тунă, ахăртнех, çырнă чухне чылаях асапланса ларнă пулмалла,—терĕм эпĕ хамăн юлташа.

Пирĕн çумма ĕлĕкхи искусство çыннисенни пек вăрăм çÿçлĕ сарă йĕкĕт пырса тăчĕ.

— Комедия çырма йывăр пулнă пуль тетĕр-и?—терĕ вăл темшĕн йÿçеккĕн кулса.—Автор асапĕ вăл мĕ-ĕ-ĕн! Вăл хăй шутланă та, хăй çырнă. Ак Малайкин асапланать тĕк асапланать вара! Тантал хĕнне тÿсет.

— А кам вăл сирĕн Малайкин текенни?

— Малайкин-и? Эпĕ, рецензент. Комеди пирки рецензи çырас тесе вунă хут та пулĕ килтĕм ĕнтĕ ку постановкăна. Пĕрисем ырлаççĕ, теприсем хурлаççĕ. Тахăшне ĕненмелле, тахăшин шухăшне тĕпе хурса çырмалла. Асап!

Афиша патĕнче тăракан зрительсем халь çеç курса тухнă комеди пирки калаçни илтĕнчĕ. Пирĕн рецензент блок-нотне туртса кăларчĕ те унталла тапса сикрĕ.

## Вăхăтсăр савăнăç

Сÿрекасси ялсоветне пĕр палламан çын пырса кĕчĕ.

— Эпĕ—кинооператор,—терĕ вăл ялсовет председательне.—Сирĕн яла киножурнал çине ÿкерес тетпĕр.

— Киножурнал çине? Пирĕн яла-и? Ну?

— Сирĕн яла çав.

— Сÿрекассинех-и? Тен, йăнăшрăр пуль? Тен, сире юнашар Тÿрекасси кирлĕ пуль?

— Тÿрекасси мар, Сÿрекассиех кирлĕ. Парти райкомĕ сирĕн яла кăтартса ячĕ.

— Парти райкомĕ тетĕр? Апла пĕлеççех ĕнтĕ вĕсем.

Ялсовет председателĕ телефон трубкине çавăрса тытрĕ.

— Алло! Колхоз правленине парăр! Ку, колхоз председателĕ Козлов юлташ-и? Итле-ха, Иван Петрович! Пирĕн пата Шупашкартан кино ÿкерекен килчĕ. Ял сăн-сăпатне ÿкерсе илесшĕн. Ийя, малта пыракан ял тесе çав.

— Тăхтăр-ха, председатель юлташ,—хутшăнчĕ савăнăçлă калаçăва кинооператор.—Эсир мана итлесе пĕтермерĕр. Пире ĕлĕкхи чăваш ялне кăтартакан сăн-сăпатсем кирлĕ. Сирĕн кунта ишĕлчĕк хуралтăсем, туса пĕтеричченех çĕрме тытăннă тимĕрç лаççи т. ыт. çавăн пеккисем пур, терĕç.

**Гримасов**

—≈≈≈≈≈≈—

## Алăка тĕкĕлесе çывăраççĕ

Тинĕсъел р-чи (Куйбышев облаçĕ) „Пушкин“ колхоз пожарникĕсем, çĕрле хурал тăрас вырăнне, вăхăта упалла çывăрсах ирттереççĕ. Пĕр каçхине тĕрĕслеме пынă комсомолецсем, вĕсем патне чÿречерен кĕрсе, пĕрин пуçĕ айĕнчен минтерне илсе кайнă. Пожарниксем нимĕн те сисмен. Кун пек намăс историсем малашне те пуласран, халĕ вĕсем каçхине хăйсем пурăнакан пÿрт алăкне шал енчен турчăка-ухватсемпе тĕкĕлесе, чÿречисене вĕренпе кăкарса çывăраççĕ. **А. Сергеев.**

## Шанса панă хуçалăха юхăнтарса янăшăн

— Павел Иванович! Сывă-и? Ĕçÿсем мĕнле?

— Тĕрĕслеççĕ.

# Утса ҫӳрекен вулав ҫурчӗ

Трак р-чи Мӑн-Супар вулав
ҫуртӗнчен ялсовет пекарни тунӑ.
Аверкиев.



— Тимахви пичче, урам тӑрӑх утса ҫӳрекенӗ кам вӑл?
— Вулав ҫурчӗ.
— Мӗнле вулав ҫурчӗ? Ҫын вӗт вӑл!
— Вулав ҫурчӗ ҫав, Тарас Павлович ятлӑскер. Библиотекӑри пӗтӗм кӗнекесене шинель ҫаннисем ӑшне тултарнӑ та валеҫсе ҫӳрет.

—≈≈≈≈≈≈—

# Паллӑ событисен хроники

* * Финляндия министрӗ пулнӑ мыскараҫӑ Каяндер отставкӑна тухса „правительствӑна“ Таннера панӑ, Таннер банк директорне Рютине панӑ, Рюти хӑйӗн бухгалтерне, бухгалтер счетовода, счетовод кассира. Кассирӗ растратӑсем тума юратаканскер пулнӑ, ҫавӑнпа Финляндия „правительствин“ юлашки укҫи-пухчисене ресторана кайса ӗҫсе янӑ та урӑх ҫын паспорчӗпе вӑрманалла тарнӑ.

Каяндер хӑйӗн халӑхӗнчен тарса Суоми вӑрманне ҫитсе выртнӑ. Сакӑр тенкӗ парса ҫур литр ҫуттине йӑвантарнӑ хыҫҫӑн ӑҫталла кайни паллӑ мар.

* * Гавас агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, шӑрӑх Каракум пушхирӗнчи шур упасем Байкал кӳллине путса вилнӗ. Сывлӑхӗсем аван.

* * Кӑнтӑрла иртсен виҫӗ сехет те 17 минутра Гавас агентстви пӗлтернӗ хыпарсенчен кулса Африкӑра виҫӗ ҫын вилнӗ тата иккӗшин хырӑм тирӗсене операци тунӑ. Чӗрӗлессе шанмаҫҫӗ.

* * *

* * Чадукассинчи (Трак р-нӗ) сельмаг продавецӗ К. Трофимов хӑйӗн пӗр йыттине Ултлайка, теприне Лартайка, виҫҫӗмӗшне Растрата тусанта укҫаантӳлейка тесе ят панӑ. Йыттисем аван ӳсеҫҫӗ.

* * Ҫӗрпӳри пӗр клубра М. Мелов ҫырнӑ „Ялта“ комедине выляса панӑ чухне залӑра виҫӗ ҫын пулнӑ. Вӗсенчен пӗри макӑрнӑ (пьесӑра кулӑш ҫуккипе тарӑхса), иккӗшӗ анасласа ларнӑ.

* * Чӑвашсен Государство Академи театрӗн чӑваш труппинче ҫанталӑк лӑпкӑ тӑнӑ: никампа никам та харкашман. Тӗлӗнмелле!

* * Паян А. П. Чехов „От критика Д. за три версты несет самонадеянностью и глупостью“, тенӗренпе 50 ҫул тулать.

* * Пирӗн Ёнселейкин, Мухтайкин тата Ӑнатакӑнапӑртакварҫайкин — Пӑртакмухтайкин хушаматлӑ критиксем ҫуралнӑ. Виҫҫӗшӗ те пысӑк мар шанчӑк параҫҫӗ.

* * М. Делов драматургӑн «Ялтӑра», «Вӑрманта», «Хирте», «Хутарта», «Килте», «Тӳпере», «Маччара», «Тӗпсакайӗнче» ятлӑ пьесисен сборникӗ пичетленсе тухнӑ. Театр работникӗсемпе рецензентсене укҫасӑрах параҫҫӗ.

* * Пилӗк пин те пилӗкҫӗр ҫул каялла Иудея патши—философ Соломон хӑйӗн ывӑлне ҫапла каланӑ: «Чапа тухас тетӗн пулсан—критик пул. Пӗр-икӗ статья пекки ҫырсанах, сан умӑнта чылай писательсемпе артистсем йӑпӑлтатса ҫӳреме тытӑнӗҫ. Екки ярсан пирӗн ҫинчен те ырласа статья ҫырӗ-ха, тесе санӑн ухмахла сӑмаххусене те мухтӗҫ. Сана пӗтӗм хула пӗлсе ҫитӗ, сана курорта ярӗҫ», тенӗ.

* * Шӑмӑршӑ столовӑйӗнче типӗ ҫанталӑк тӑрать (баксенчи сивӗ шыва пӗр тумлам юлмиччenex пиҫнӗ шӳрпе ҫине ярса пӗтернӗ).

* * Хӗвел тӗттӗмленмен: Йӗкӗрварти (Ҫӗрпӳ р-нӗ) «Шурӑмпуҫ» колхоз председателӗ А. И. Иванов паян ӗҫе урӑ пуҫҫӑн тухнӑ.

Ҫав ялтах «ҫавӑ ҫапла, тет», «Ку капла, тет» сӑмахсене минутра 500-шер калама пултаракан икӗ ҫын тупӑннӑ. Пӗри—Якимова Ульяна, тепри—Ефимова Евдокия. Вӑйлӑ ҫил-тӑман.

* * Паян Исаклӑ р-чи (Куйбышев облаҫӗ) «Самарка» колхоз клубӗнче Шекспирӑн «Ромео и Джульета» ятлӑ трагедине лартнӑ. Куракансем ытла нумай пулнипе Хорьков конюхӑн пальто аркине хӗстерсе татса илнӗ. Шекспира суд урлӑ ответ тыттармаҫҫӗ.

—<□>—

## Мӗн ӗҫ пур

Ишлей районӗнчи „Самолет“ колхоз ҫумӗнчи Осоавиахимӑн пуҫламӗш организацийӗ япӑх ӗҫлет. 1939-мӗш сулхи май уйӑхӗнчех Осоавиахимӑн районти советӗнчен 100 патрон илсе килнӗччӗ, вӗсем те пӗр усӑсӑрах выртаҫҫӗ.

Шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв юхать,
Шӑнкӑрч чӗппи шыв ӗҫет;
Чӗкеҫ чӗппин мӗн ӗҫ пур...

Пирӗн Осоавиахим организацин 100 патрон „складра“ выртать; „Вӗсемпе сирӗн мӗн ӗҫ пур“, тет пире Осоавиахим организацин председателӗ Федоров.

Эпир „Федоров сӳпӗлтетнинче пирӗн мӗн ӗҫ пур“ тесе тӑмарӑмӑр, ӑна тытрӑмӑр та „Капкӑн“ хушшине хӗстертӗмӗр. **Н. Сиккас.**

## Пассивлӑ хутшӑнакан

— СВБ бюровӗн заседанийӗ 7 сехетре пуҫланать ҫавна манман-и?

— Халӗ ҫиччӗ ҫитесси ҫур сехете яхӑн та манман та-ха, ҫиччӗ ҫитесси пилӗк минут ҫине юлсан манатӑпах пулмалла.

## Нумай ятлӑ

— Эсӗ Етӗрне районӗнчи Мӑн Йӗкӗт ялӗнчен тетӗн. Сирӗн „Хӗрлӗ Октябрь“ колхозра ӗҫлекенсем ҫинчен ыйтса пӗлесшӗн. Кладовщик мӗн ятлӑ сирӗн?

— Мӗн тетӗн?

— Кладовщика мӗнле ятпа чӗнеҫҫӗ?

— Ялан пӗр пек мар: куҫ умӗнче Андрей Иванович, Унтри теҫҫӗ, куҫ хыҫӗнче—Сӗлӗ вӑрлакан, Ыраш вӑрри, Пыл вӑрри, Жулик, Растратчик теҫҫӗ.

—≈≈≈≈≈≈—

# Кахалшӑн сӑмса айӗнчи те курӑнмасть



— Юр тытмалла, теҫҫӗ. Сӳпӗлтетеҫҫӗ кирлӗ мара. Кӑҫал юрӗ те ҫумарӗ вӗт-ха!..

# Йăнăш мар йăнăш

Хаçата верстать туса пĕтере пуçланăччĕ, Палантай Хĕлипĕ ĕçлекен пӳлĕме редактор чупса кĕчĕ.

— Хатĕрлен!—терĕ вăл Хĕлип умне пĕр тĕркĕм хут пăрахса.—Халех! Часрах çитмелле!

— Мĕн пулнă? Ăçта каймалла?

— Тир-сăран заводне. Перцев хушаматлă рабочи хăйĕн ĕнерхи ĕç нормине 11 хут ӳстерсе тултарнă... Ку номера кĕске информаци те пулин парас пулать. Эсĕ опытлă репортер, часах кайса килме пултаратăн.

— Срокĕ мĕн чухлĕ?

— Çур сехет. Материалне лерен телефонпа çеç пĕлтер.

Палантай алăк патне çитсен ăна редактор тепĕр хут хуса çитрĕ.

— Эсĕ завода мар, унăн хваттерне кай. Халиччен вăл ĕçрен таврăннă ĕнтĕ. Чехов урамĕ, 25-мĕш №-лĕ çурт. Авланнă... Вĕçтер!..

Палантай хăйне кирлĕ çурта шыраса тупиччен вунпилĕк минут та ытла иртсе карĕ. Çавăнпа вăл çитсе кĕрсенех килхуçине сывлăх сунчĕ те тӳрех сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ.

— Эпĕ хаçат репортерĕ... Васкавлă ĕç... Çав тĕрлĕ!.. Сире тупаймасăр чылай вăхăт иртттертĕм,—сывлăш çавăрмасăр каласа хучĕ Палантай. Унтан хут тĕркĕмне туртса кăларчĕ те пĕр вăхăтрах тĕпчеме тата çырма тытăнчĕ.—Хаçат валли материал кирлĕ... Рекордăр çинчен... Эсир, конешнă, Перцев юлташ?

— Эпĕ...

— Ятăр, аçу ячĕ?

— Кирилл Петрович. Анчах та эпĕ кунта...

— Так! Рекордăра ĕнер тунă? Нормăна 11 хут тултарнăччĕ пулас?

— Мар, 13 хут, Паян. Итлĕр-ха, эпĕ кунта...

— Так, так, ăна пирĕн редактор юплĕ илтнĕ пулас, вăл 11 хут тенĕччĕ...

— Ăна ман пуçана...

— Юрать, юрать. Пуçанăр çинчен ыран килсе калаçăпăр. Кану кунĕ. Сăмах паратăп... Мĕнле цехра ĕçлетĕр?

— Çĕлекеннинче. Пуçана атă кĕлисем касакан çĕрте. Вăл ĕнер...

— Юрать эппин, пуçанăр çинчен те паянах калаçăпăр, материалсене редакцине пĕлтерсенех. Халлĕхе ман ыйтусене çеç каласа пырăр. Заводра хăçантанпа ĕçлетĕр?

— Çиччĕмĕш çул. А пуçана...

— Унччен ăçта ĕçленĕ?

— Грузчикра. А пуçана...

— Кинона кайма вăхăт тупăнать-и?

— Кашни картинах кайса куратăп. Анчах эпĕ кунта...

Палантай телефон трубкине çавăрса тытрĕ те... ун умне Кирилл Петрович пырса тăчĕ.

— Итлĕр-ха, юлташ,—терĕ вăл Палантая аллинчен тытса,—эсир калаçма та памастăр-çке мана. Эпĕ кунта хăнана çеç килнĕ. Достоевски урамĕнче пурнатăп. Хушамат—Буров. Пуçанана, Перцева, халь çеç завода чĕнтерчĕç. Совещанине...

Палантай сăн-пичĕ сасартăк улшăнса кайрĕ.

— А рекорд?—терĕ вăл шăппăн.

— Рекорд тĕрĕсех, акă кĕнеке çине те паллă тунă. Анчах ĕнер мар, паян тунă ăна. Ĕнер пуçана нормăна 11 хут ытларах тултарнăччĕ, эпĕ паян 13 хут ӳстерсе тултартăм. Çавă кăна. Ыранах пуçана манран та иртсе кайма пултарать.

Палантай ăнсăртран Буров çинчен çыраннă статьине тепĕр хут пăхса тухрĕ те Перцев хваттерĕнченех телефонпа редакцине пĕлтерчĕ.

**С. Матакин.**

## Тиркешекен

Комиссионный магазин прилавки умĕнче пĕр çын шăтăк пуçлă атă тытса тăнă.

— Тĕлĕнмелле!—тенĕ вăл продавец çине кăмăллăн пăхса.—Ăçта кăна туса кăлараççĕ кунашкал тискер япаласене?! Пăхăр-ха эсир ун çине: хăйне анчах çĕлетнĕ темелле, пур енчен те вĕрçĕнех, тăхăнсан та ик-виççĕрен ытла тăхăнман пулĕ, а хăй çăварне карма та ĕлкĕрнĕ, апăрша! Тата кĕлисене мĕнле çĕленĕ, пăхăр-ха, кĕлисене мĕнле çĕленĕ! Пĕри чалăш, тепри лутра. Кунчисене тултармăш пек темĕнле сыпăклă-сыпăклă туса пĕтернĕ. Тьфу! Ăçти çăва шăтăкĕнчен тупнă эсир ку тĕлĕнтермĕш атăсене?

— Çăва шăтăкăнчен мар,—тенĕ ăна хирĕç продавец,—ăна ĕнер хунчăкам сутма тесе кӳрсе пачĕ. „Кожупряж" мастерскойĕнче çĕлетнĕ те, тепĕр кунах аттин пуçĕ тăпăлса тухнă.

Шавлăн калаçса тăракан çын аттине прилавка çине пăрахнă та пĕр сăмах чĕнмесĕр урамалла тухса сирпĕннĕ, мĕншĕн тесен вăл çын Шупашкарти „Кожупряж" правленийĕн председателĕ Морковкин юлташ пулнă.

**Ф. Гримасов.**

## „Физкультурник"

Бижбуляк р-чи (Баш республика) „Майăн 1-мĕшĕ" колхозри комсорг Кузьмин Алексей пĕр вăхăтрах вулав çурт пуçлăхĕ тата юнашар ялта пуштă начальникĕ пулса ĕçлет. Ĕçĕсем виçĕ çĕрте те япăх.

**К. Шурăмпуç.**

— Мĕнле физкультурник чупса çӳрет ку икĕ ял хушшинче?

— Вăл-и? Кузьмин Алексей. Унăн портфелĕ пĕр çĕрте, çĕлĕкĕ тепĕр çĕрте ĕçлет. Хăйĕн кĕлеткийĕ икĕ ял хушшинче „чупса" çӳрет. Ĕçĕ çеç пĕр вырăнтан хускалмасть.

# Икĕ специалист

Кăнтăрлахи апат çиме ресторана кĕрсе лартăмăр. Иккĕн эпир. Пĕри эпĕ, çакна çыраканни, тепри—пĕр учреждение кадрсен секторĕн начальникĕ пулса ĕçлекен Махалов юлташ, манăн çывăх тусăм.

— Пăх-ха çав кĕтессе, юлташăм,—терĕ Махалов, пăрăç коробкине сĕтел варнерех илсе лартса.— Куратăн-и çав икĕ çынна?

Эпĕ вăл кăтартнă тĕле пăхрăм та чăнахах сĕтел хушшинче ларакан ик арçынна куртăм. Тумтирĕсенче те, сăн-пичĕсенче те нимех те ытлашши курăнмарĕ мана. Ун йышши этемсем пинĕ-пинĕпе пирĕн хулара. Эпĕ хамăн шухăшăма Махалова уçса патăм.

— Мĕнле шухăшлан эсĕ?—ыйтрĕ вăл манран.— Камсем пек туйăнаççĕ сана вĕсем?

— Этемĕн профессине сăн-пичĕпе тумтирĕнчен пăхса пĕлме хĕн, мунчари пек пурте пĕр майлăн курăнаççĕ,—терĕм эпĕ.

— Вĕсем иккĕшĕ те пысăк специалистсем: пĕри пысăк квалификациллĕ агроном, тепри—полиграф-работник. Иккĕшĕ икĕ çĕрте ĕçлеççĕ. Нумай пулмасть эпĕ вĕсем ĕçленĕ учреждениисенче пулса куртăм. Иккĕшĕнпе те пит лайăх паллашрăм. Çапла эсĕ икĕ специалиста курса ларатăн.

— Пит аван,—терĕм эпĕ тусăмпа килĕшсе, урăх нимĕн калама пĕлменнипе.

— Ав, лешĕ, сулахайри, хура çÿçли, Тимирязев ячĕпе тăракан ялхуçалăх академинче вĕреннĕ. Çĕрĕç техникине шутсăр лайăх пĕлет. Мана гибридизаци, нитрогинизаци, азотогенизаци, химизацисем çинчен каласа парса тĕлĕнтерчĕ. Питĕ пысăк специалист...

— Маттур!—терĕм эпĕ.—Çавăн пек специалистсем пире питĕ кирлĕ пулаççĕ...

— Унпа юнашар ларакканни те хăйĕн специальноçне пĕлес тĕлĕшпе юлташĕнчен юлсах тăмасть. Вăл мана типографи машинисем çинчен хавхалансах каласа пачĕ. „Офсетсем“ çинчен, ротационкăсем çинчен, двойной скоропечатня çинчен, цинкографисем, литографисем, ксилографисем çинчен, тем çинчен те каларĕ. Темиçе сăрпа пичетлекен машинăсене аван пĕлет...

— Пултарать апла... Хăйсен ĕçĕсене лайăх пĕлекен специалистсем çителĕксĕртерех, тетпĕр. Акă кунтах иккĕн тупăнчĕç. Вĕсем хăйсем пĕлнĕ ĕçĕсене аван туса пынине курсан, чуну пит савăнчĕ пулĕ.

Ман Махалов йÿççĕн кулса илнине сиссе шарламарăм.

— Да!—терĕ вăл ассăн сывласа ярса.—Эсĕ каланă майлă пулсан аванччĕ те, анчах пĕр япала чăрмантарать... Леш, хура сăнли, ялхуçалăх академинче вĕренни, типографире юрист-консульт пулса ĕçлет. Тепри, типографи ĕçĕсене аван пĕлекенни...

— Çĕрĕç органĕнче управдел вырăнче ларать,—терĕм эпĕ вăл калас сăмахсене тытса илсе.

— Тĕрĕс!—терĕ вăл тарăхнă сасăпа.—Ун пек хăйсем пĕлнĕ ĕçрен урăх ĕçе куçса кайнисем татах та пур пирĕн хушăра...

— Пур çав!—терĕм эпĕ те.—Ав, типографире, набор тăвакан цехра инструктор пулнă Денисов наборщик Чăвашрадикомитетра ĕçлет. Гурьева наборщица—продавщица...

— Комиссаров зоотехник Чебторгра кадрсен секторĕн начальникĕнче ĕçлет,—татах хушса хучĕ Махалов.—Зоотехник Семенова —мельтрестра экономист, Семенова зоотехник—макарон фабрикĕнче лаборантка пулса ĕçлет, Тимофеева зоотехник—почтăра...

— Нда!—терĕм эпĕ.—Сахал мар ун йышшисем! Эй, официант!—тесе кăшкăрса илтĕм эпĕ, ку темăпа каласма пăрахас шухăшпа.—Иккĕмĕш блюдо хăçан пулать! Ма нумай кĕттерен!..

**Ив. М-и.**

# Спорт хыпарĕсем

** Физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕн йĕлтĕрçĕсен çекцин ларăвĕ йышшăннă тăрăх, йĕлтĕрçĕсен хĕллехи сезонĕ 1940 çулти январĕн 1-мĕшĕнче пуçланмалла, йĕлтĕрçĕсен массисем йĕлтĕрпе ярăнас сезона юр çусанах уçнă. Ку ĕнтĕ комитетăн Йĕлтĕрçĕсен секцийĕ йĕлтĕрпе ярăнмалли сезона малтанах уçма кун тупайманнине пĕлтерет.

** Пĕр пуçламĕш шкулта уçăлнă шашкă кружокĕн пĕрремĕш занятинче шурă шашкăсемпе нихăш ача та вылясшăн пулман, пурте хĕрлисемпе кăна вылясшăн пулнă. „Мĕншĕн тесен,—тенĕ ачасем,—шуррисене хĕрлисем яланах çĕнтерсе хураççĕ, ĕлĕк те çапла пулнă, халĕ те çаплах, ÿлĕм те çаплах пулĕ“,—тенĕ.

** Ачасем Шупашкарта халăх нумай çÿрекен урамсене конькипе, çунашкапа ярăнмалли каток туса хунă. Халĕ хула урамĕсем тăрăх канлĕн уçăлса çÿрес текенсем аслă поэт А. С. Грибоедов: „Нельзя-ли для прогулок подальше выбрать закоулок“ тенине пурнăçа кĕртме пăхаççĕ.

## Пăрлă тротуарсем çинчен

Т у х т ă р:—Санăн кашни кунах урам тăрăх уçăлса çÿрес пулать.

П а ц и е н т:—Çÿреттĕмччĕ те анчах чăрмантараççĕ-ха?

Т у х т ă р: —Камсем?

П а ц и е н т:—Домоуправленисемпе комендантсем. Тротуарсем çине хăйăр сапмаççĕ. Шуçса ÿкмелле.

# Васукпа Çимен

„Фольклор пухакансем халăх каланине, мĕнле юрланине хăйсем майлă улăштарма тăрăшаççĕ“.
(„Чăваш Коммунĕ“ хаçатран.)
„Начар çĕвĕç—лайăх тавара пăсма кăна“.
*(Ваттисем каланинчен.)*

Тумтирсене çĕлет Васук
Питех ăста вара,
Васук пек çĕвĕç урăх çук
Халь пирĕн салара.

Çĕлет вăл шупăр, е халат,
Ĕ кĕрĕк, е сăхман—
Пурте ăна спасиб калать,
Пĕри те тарăхман.

Васук патне пĕр ирхине
Пырать Çимен пичче.
Васук илет те лентине
Юлать ăна виççе.

Ак кунĕпех Васук-канман,
Ларать хĕрӳ ĕçре.
Пулса та тăчĕ çĕн сăхман
Хуçи килнĕ çĕре.

— А ну-ка, тăхăн-ха вăр-вар!..
Епле, Çимен пичче?
Ни аслă мар, ни тăвăр мар:
Шăпах хăвна виçе.

Анчах Çимен пĕлет майне.
Ак çитрĕ те килне,
Пахаламашкăн сăхманне
Пăхать тĕкĕр çине.

— Çук, юратмасп ку сăхмана—
Терĕ юлашкинчен,—
Кăштах вăл вăрăмрах мана,
Татам-ха аркинчен.

Ак хачĕ тытрĕ те алла,
Пуçларĕ вăл ĕçе.
Шăпах ун пĕр мăшăр тăла
Ак тупăнчĕ кĕçех.

Çурма-пиншак, çурма-темскер
Халь тăхăннă Çимен.
— Ак çак тумтир, çĕленĕскер,
Кайма пĕлмест çирен!—

Тесе каçпа тумтиррине
Сак çинелле ывтать,
Анчах та тепĕр ирхине
Каллех ăна тытать.

* * *

Пурах-ха пирĕн хушăра çынсем...
Анчах çырмастăп эп вĕсем çинчен.
Çимен пекех „касма“ вĕсем „ăста“:
Юсас тесе, часах хураç пăсса.

**Ф. Ванин**

# МТС-сенче

## Ремонтламаççĕ

Пирĕн Шăхасан МТС тракторсене ремонтлассипе малта пырать. Анчах çынсене ремонтлас ĕç вара питĕ те кая юлнă. Сăмахран, МТС аслă бухгалтерĕ А. Г. Волков час-часах:

„Ĕçетпĕр те çиетпĕр,
Пире никам чараймасть“,

тенĕ евĕрлĕ хитре мар сасăсем кăларса ĕç вăхăтĕнчех тӳне-тӳне каять. Аслă бухгалтертан Романов хушаматлă бухгалтер та юлмасть, вăл та „урахисем“ айванланнипе чипер утса пынă çĕртенех кĕрт ăшне кĕре-кĕре ӳкет. Çакнашкал чирчĕрсем хăшпĕр чухне виç-тăват куна та тăсăлаççĕ.

Директорăн çак ик уралла „тракторсене“ ремонтлас ĕçе те манăçа хăвармалла мар.

**С. К.**

## Каламан

Ваттисем каланă: „Нумай пурăнатăн—нумай куратăн“, тенĕ. Анчах Ишлей МТС директорĕ Миронов юлташ ялхуçалăх машинĕсене мĕнле упранине курма нумай вăхăт кирлĕ мар, МТС килкарти витĕр çеç тухмалла.

Унăн килкартинче тракторсем, сеялкăсем, молотилкăсем тата ытти ялхуçалăх машинĕсем шăнасран уçă пĕлĕтпе витĕнсе лараççĕ, кĕркунне çыпăçса тулнă пылчăкран халĕ те тасалма май килменшĕн вăтаннипе хĕрелсе (тутăхса) кайнă...

Ваттисем майсăр çынна кушак пăхма та юрамании çинчен каланă, машинăсене пăхма юранипе юраманни çинчен нимĕн те каламан. Каламаллах пулнă!

## Иккĕшĕ те

Куславккапа Сĕнтĕрвăрринчи машинно-тракторнăй станцийĕсен директорĕсем Шупашкартан тракторсемпе комбайнсене ремонтлас тĕлĕшпе панă кăтартусене пурнăçа кĕртмен, сĕтел сунтăхне кĕртнĕ. Çавăнпа вĕсем декабрь уйăхĕн çурри тĕлне пĕрер трактор та юсаман.

Пирĕн шухăшпа çав асăннă МТС директорĕсем пĕрне-пĕри Шупашкарта тĕл пулсан ак çапла каласса иртсе каяççĕ:

— Иванов юлташ, тракторсене юсас ĕç мĕнле пырать-ха?

— Вăл ĕçе тытăнман-ха эпир. Пĕр трактор та юсаса кăларма май пулмарĕ.

— Паян декабрĕн 13-мĕшĕ-çке! Тракторсене юсама хăçан тытăнма шухăшлатăр апла?

— Ма васкас, Ериков юлташ, эсир те тытăнман вĕт!

# Сӗрӗм кӑларакансем




— Пӑхӑр-ха, вӗҫен кайӑксем ӗнтӗркесе лараҫҫӗ. Вӗсене сӗрӗм тивнӗ пулмалла.
— Мӗнле сӗрӗм?
— Ҫак сысна ӗнтекенсем сӗрӗм кӑларнӑ. Вӗсене хӑйсене сӗрӗм тивертмелле.

# Айăплисене ответ тыттараççĕ

(Юмах вырăнне)

Сухха инке çичĕ чăхă та пĕр автан усранă. Çичĕ чăхран улттăшĕ акăш пек шурă, пĕри пăчăр пек чăпар, автанĕ ăсан пек хурарах кăна хĕрлĕ пулнă. Кас пулсан кашта тулли кăрăлтатса ларнă вара вĕсем.

Сахаллине ытларах сăнаççĕ, теççĕ ваттисем. Тен çавăнпа та пулĕ, Сухха инке те чăпар чăххине ытларах юратнă. Чăпар чăхă, хай чăхă анчах пулин те, сиснĕ çавна. Сивĕ кунсем çитсенех, нусма умне пынă та вăл, тĕршĕнсе ларнă.

— Ай, тамаша! Пĕртен пĕр чăпар чăххăм та вилсе каятьшим ĕнтĕ,—тенĕ Сухха инке ăна курсан. Вара тытса пÿрте илсе кĕнĕ те, çăкăр тĕпретсе панă. Савăнсах кайнă чăпар чăхă. Çăкăр çинĕ-çинĕ те вăл, шыв ĕçнĕ, унтан, кăмака айне кĕрсе ларнă та хăйăлтатсах çывăрнă. Çапла питĕ шеп пурăнса, чăпар чăхă сивĕ хĕл мĕнле иртсе кайнине те сисмесĕрех юлнă. Çуркунне çитсен нур чăхсенчен те малтан çăмарта тума пуçланă вăл. Куншăн Сухха инке тата ытларах юратнă ăна. Анчах ытти чăхсем те, çурхи тислĕк çинче ытларах апат тупма пуçласан, çăмарта тума тытăннă. Сухха инке кашни кунах виçĕ йăваран çичĕ çăмарта пухса кĕнĕ. Çимелĕх те, лавкана сутмалăх та çăмарта пулнă Сухха инкесен. Халь ĕнтĕ вăл чăпар чăххине пÿрте кĕртсе çăкăр çитерсе чăрманман.

— Пурăнĕ-ха, ыттисем пурăнаççĕ вĕт,—тенĕ вăл.

Анчах чăпар чăхă, хай чăпар пулин те, тислĕк çинче чакаланса вараланасшăн пулман. Е автан таврашĕнче çÿресе, автан чавса тупнипе тăранса пурăннă вăл, е тата сысна валашкинчен вăрлама пăхнă. Чăпар чăхă çапла хăтланни автана та, сыснана та килĕшмен. Автан унран пăрăнса çÿреме пуçланă, сысна чутах унăн пуçне çыртса татман.

— Мĕнле пурăнас?—тесе шухăшланă хайхи чăпар чăхă. Картиш тăрăх мăйне пăркаласа çÿренĕ чух яланах хайĕнчен хай: „как-как-как?“ тесе ыйтнă вăл.

Пĕрре çапла Сухха инке пусма умне тухнă та: „тит-тит-тит!“ тесе картишне çăмарта хуппи сапнă. Чăхсем чупса çитнĕ те, самантрах çисе янă ăна. Чăпар чăх та унтах пулнă. Нумайччен пăхса тăнă вăл пусма умĕнче Сухха инке тухасса кĕтсе. Тухман Сухха инке, пÿртре хăнасемпе каласса ларнă вăл. Вара чăпар чăхă сарайне кайнă та, кăтикле-кăтиклех хайĕн йăви çине çăмарта тума хăпарса ларнă. Çăмарта туса ларнă чух та хырăм çинченех шухăшланă вăл.—Акă ман айра темиçе çăмарта. Эп те туса хурсан, тата ытларах пулать. Вара хуçайкă килет те, пухса каять вĕсене. Чее хăтланаççĕ çав çынсем: хайсем çăмарта ăшĕнчине çиеççĕ, пире хуппине сапса параççĕ. Мĕнле ĕлĕкех сисмен-ха эп çакна?—тенĕ чăпар чăхă. Çапла шухăшласа ларнă çĕртех çăмартине те туса хунă вăл. Унтан ура çине тăнă та, йăви çине çаврăнса пăхнă. Шап-шурă курăнса выртнă çăмартасем. Тÿсеймен вара хайхи чăпар чăхă: пĕр çăмартине так! тутарнă сăмсипе. „Ай-ай, тутлă!“ тенĕ вăл кăшт ĕçсе пăхнă хыççăн. Унтан вăл пĕр çăмартана йăлтах ĕçсе янă. Чăпар чăхă усал ĕç тунине пĕр шурă чăхă курнă.

— Эй, мĕн хăтланатăн эсĕ!—тенĕ вăл чăпар чăхха.

— Ан шарла эс. Акă сана, ме, çи!—тенĕ чăпар чăхă çĕрти шурă чăхă умне çăмарта хуппине пăрахса. Шурă чăхă çăмарта хуппишĕн те савăннă, нимĕн те шарламан...

Вăррăн вăрламасан алли кĕçĕтсех тăрать, теççĕ. Чăпар чăхă та çавăн пекех пулса кайнă. Пырakиле икшер, унтан виçшер çăмарта шăтарса ĕçме пуçланă вăл. Хуплисене пĕрмаях леш курмиш пулма юратакан шурă чăхха парса çитернĕ. Анчах кирек мĕнле вăррăн та шалчи тулать-тулатех.

Чăпар чăхă вăрлама вĕренниччен Сухха инке кашни кунах çичшер çăмарта пухса кĕнĕ, терĕмĕр. Пĕррехинче вăл улттах илсе кĕрет.

— Тахăш чăхă кун сиктерсе тума пуçларĕ ĕнтĕ,—тенĕ вăл унчухне. Анчах тепрехинче виçĕ йăвара пилĕк çăмарта анчах иккенне курсан, икĕ пĕççине шарт çапнă вăл.

— Ай, тамаша! мĕн пулнă ман чăхсене? Çу кунĕ пуçланнă-пуçланманах çăмарта тума пăрахаççĕ!—тенĕ вăл тарăхса. Çав вăхăтра шăпах çăмарта ытларах кирлĕ пулнă ăна, мĕншĕн тесен хулара вĕренекен ывăлĕпе хĕрĕ каникула таврăннă пулнă. Çавăнпа та вăл çичĕ чăхăран пĕрне, çăмарта тума пăрахнине пусса хайĕн ачисене çитерме шутланă. Анчах хăшĕ çăмарта тумасть? Çавна тĕрĕслесе пĕлес шутпа Сухха инке пĕр кун кунĕпех, мĕнле чăхă çăмарта тума ларманнине сăнанă. Вăл сăнанă тăрăх çичĕ чăхăран çиччĕшĕ те кăтиклесе йăвисем çине çăмарта тума хăпарса ларнă. Сухха инке татах савăннă: „Паян пурте тăваççĕ-ха тата“, тенĕ. Анчах пăртак тăрсан çăмарта пухма тухнă та, виçĕ йăвара тăватă çăмарта çеç тупнă. Ыванииченех çухрашнă вара вăл. Чутах пускилсем патне, вĕсен ачи вăрлать пуль тесе, çапăçма кайман. Юлашкинчен вăл чăххисене „тит тит-тит-тит-!“ тесе йыхăрса пуçтарнă та:

— Кам вăрлать ман çăмартасене?—тесе ыйтнă. Чăпар чăхă унăн ури çумĕнчех кушак пек йăпăлтатса сĕртĕнсе çÿренĕ, леш шурă чăхă та, çăмарта вăрри кам иккенне пĕлет пулсан та, шарламан, мĕншĕн тесен ку ĕçре хайĕн те сăмси-ури таса мар пулнă.

Тепĕр кунне Сухха инке çăмарта вăррине тытасах тесе, лупас айне пытансах сыхласа тăнă. Çăмарта вăрри никам та мар, хайĕн юратнă чăпар чăххиех иккенне курсан, тĕлĕнсех кайнă вăл.

— Ах, намăссăр, кĕççе пит! Хĕл хута пÿртре çăкăр çитерсе усранăшăн çапла таваратăн иккенха эсĕ! Чим-ха эп сана, пархатарсăр чун! Епле вăл, Йĕкĕрварти (Çĕрпÿ р.) Архипова Марине пекех растратă тума вĕреннĕ. Каçармастăп сана куншăн, Архиповăна та ахаль каçарас çук-ха сутра,—тенĕ Сухха инке. Вара чăпар чăхха ярса тытнă та вăл хуран патнелле çул кăтартнă. Çакна курсан леш шурă чăхă та çăмарта хуппи çиме пăрахнă.

**А. Кăлкан**

—≈≈≈≈≈≈≈—

# Капкӑн юлташ!

*Комсомольский р-чи „III Интернационал“ колхоз счетоводӗ П. К. Зверев чупассипе нихӑш ӑмӑртура та мала тухса курман. Анчах ҫапах та ӑна пирӗн колхозниксем ниепле те хуса ҫитсе тытаймаҫҫӗ. Ирхине Зверев правлени алӑкӗн ҫӑрине тайкаланса пырса тытса пӑхать те мухмӑр чӗртме юнашар киле кӗрсе каять. Ӗҫпе пынӑ колхозниксем унта пырса ҫитнӗ ҫӗре, Зверев карта хыҫӗпе йӑпшӑнса тухса иккӗмӗш киле чӑмать. Эсир унта пынӑ ҫӗре Зверев виҫҫӗмӗш килӗре... Е хӑшпӗр чухне эрни-эрнипе таҫта хӑяматӗнче пытанса эрех ӗҫсе ҫӳрет. Колхозӑн счетоводство ӗҫӗ тӳсме ҫук япӑхланса кайнӑ.*

*Нумаях пулмасть каллех ҫухалчӗ пирӗн Зверев. Санӑн пӗкечӳсем хушшине пырса ҫакланмарӗ-ши вӑл, Капкӑн юлташ?*

**Ҫерҫи.**

*Тӑвай районӗнчи Енӗш Нӑрваш ялӗнчи Вӑрҫӑллӑ Турӑсӑрсен ячейкин членӗсем хӑйсен ялӗнчи колхозниксем чиркӗве хупни ҫинчен илтнӗ хыпара сана васкавлӑн пӗлтерме хушрӗҫ. Кун пек хыпарсене илтсен, вӗсем малашне те пӗлтерсех тӑма шутлаҫҫӗ.*

**Шакров Я. Д.**

*Пирӗн Трак районӗнчи Мӑн Шетмӗри Туллимар вӑтам шкул Мӑн Шетмӗ ялсовечӗн бюджечӗ ҫинче тӑрать. Ялсоветран бюджет тӑрӑх партӑсем, вӗренӳре кирлӗ пособисем, вутӑ, краҫҫын тата ытти япаласем туянма ялсовечӗн шкула 16000 тенкӗ укҫа памаллаччӗ. Акӑ кӗҫех 1939 ҫул пӗтет. Мӑн Шетмӗ ялсоветӗнчен шкулӑн татах 11000 тенкӗ илмелле. Ку укҫана ялсоветӗнчен кӑмӑлпа илме ҫук. Хисеплӗ Капкӑн! Юмахри ҫарӑка асаттерен пуҫласа шӑши патне ҫитиччен пӗрлешсе туртнӑ пек, директор, вӗренӳ пайӗн пуҫлӑхӗ, техничкӑсем, учительсем тата 300 вӗренекен пӗрле тытӑнса туртсан, ҫав 11.000 тенкӗ укҫана ялсоветран шкул валли туртса кӑлармалла пулӗ-ши?*

**Учитель.**

*Пӗлтӗр эпӗ Кожухпряж мастерскойне, ҫӑматӑ йӑвалама тесе, ҫӑм кайса патӑм. Ҫӑм панӑшӑн ҫӑматӑ йӑвалама пулса 1938 ҫулхи октябрӗн 14-мӗшӗнче мана 485-мӗш номерлӗ квитанци пачӗҫ. Хӗл иртрӗ, ҫу иртрӗ, тепӗр кӗр те ҫитсе иртсе кайрӗ—мана ҫӑматӑ йӑваласа памарӗҫ. Ҫӑматӑ йӑвалама заказ панине пӗлтерекен квитанци урана ӑшӑтаймасть. Вара эпӗ декабрь сиввинче юлашки хут ҫӑматӑ ыйтма кайрӑм. Мана ҫӗнӗ ҫӑматӑ парас вырӑнне, тӑхӑннӑ ҫӑматӑ илме сӗнеҫҫӗ. Эпӗ илмерӗм. Кожупряж мастерскойӗн пуҫлӑхӗ тӑхӑнса ҫӳренӗ-ши ӑна е кам та пулсан урӑххи?*

*Верхсудӑн судисполнителӗ* **Потянов.**

# ПИРӖН ПӖЛТЕРӲСЕМ


## Кӗлӗмкасси вулав ҫурчӗ валли Ӑшӑ

**питӗ васкавлӑ кирлӗ.**

Услови ҫинчен ыйтса пӗлмелли адрес: Йӗпрес районӗ, Кӗлӗмкасси, ялсовет председателӗ—М. Семенов.

## Вӗретнӗ шыва

хавасланса ӗҫӗччӗҫ КАНАШПА ШУПАШКАР хушшинче ҫӳрекен поезд ҫинчи пассажирсем. Вӗсене вӗретнӗ шыва ниҫта та тупма ҫукки питӗ кӳрентерет.

## Патефон, кӗнекесем кирлӗ

**Васькасси вулав ҫурчӗ валли тата ҫавӑн валлиех**

**РУКОВОДСТВО**

кирлӗ... Советский РайОНО енчен.

## Чӑвашсен Академи театрӗн

репертуарӗнчен чӑваш драматургӗсем, ҫӗнӗрен ҫырнӑ пьесӑсем

## ҪУХАЛНӐ

Асӑнмаллӑх та пулин пӗрне тупасчӗ.

Тавар илекенсемпе

## ҫемҫен калаҫма вӗрентетӗп

Чебторгӑн чылай продавецӗсемпе продавщицисене.

„Капкӑн“.

## Тӗреклӗ нервӑсем кирлӗ

Хумри Высли ялӗнчен Хурамалти телефон станци урлӑ Йӗпреҫпе калаҫма (ыванӑниччен шӑнкӑртаттармасӑр ху калаҫас ҫӗре илме пултараймастӑн).



**Секретарь и вып. редактор И. Илларионов. Отв. редакт. Р. О. МАЛЮТИН.**

Сдано в производство 22/XII-39 г. Подписано к печати 25/I-40г. Уполномоч. Чувашглавлита № 1228. Заказ № 835.

Формат бум. 58×84¹/8. Объем 2 п. л. Тираж 5950 экз. Изд. газ. „Чӑваш Коммунӗ“, г. Чебоксары, тип. № 1 НКМП ЧАССР




*Кукрыниксы художникĕсен ӳкерчĕкĕ тăрăх.*

**Белофиксем пур çĕре те минăсем лартса тултарнă.**